Суйлав – 2021

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашне 8 № пĕр мандатлă Муркаш округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидатшăн сасăлăр**

**Пирĕн кандидат – ТАТЬЯНА ПЕТРОВНА КОНДРАТЬЕВА**

***Ял-салана упрар, сыхлар, пĕтме парар мар!***

Лаптăка тӳлевсĕр уйăрнă

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# Санитари йĕркине пăхăнмалла

Хăйĕн участокĕнче канализаци çăлне чавма шухăш тытни пирки редакцие **Москакасси ял тăрăхĕнчи Рыккакасси ялĕнче пурăнакан хĕрарăм** çырса пĕлтерчĕ. Вăл каласа панă тăрăх, кăçал ялта шыв пăрăхĕсене çĕнĕрен чавса хунă, килĕрен шыв пур. Питĕ аван, ял çыннисен савăнăçне виçме май çук. Халĕ вара ялта пурăнакансенчен ытларахăшне канализаци çăлне чавассин ыйтăвĕ интереслентерни пирки калать. «Кӳршĕ çурт-йĕрĕнчен, кӳршĕ участокĕнчен мĕн инçĕшĕнче чавма юрать-ши ăна?» – тесе ыйтать.

Вулакана çавна каласа хăварасшăн. Ку ыйтăва район хаçатĕнче унчченхи те эпир хускатнăччĕ. Акă 4 çул каялла редакцие ун чухне гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти филиалĕн врача пулăшаканĕ пулса ĕçленĕ Владимир Матвеев хурав панăччĕ. Ку тĕлĕшпе санитари нормисем унтанпа улшăнман. Çавăнпа та ун чухне специалист редакцие панă хурав Рыккакасси ялĕнче пурăнакан хĕрарăмшăн та актуаллă пулса тăрать.

Вырăнти ыйтусене татса парассипе хальхи вăхăтра вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене пысăк полномочисем панă. Пĕр-пĕрин пахчинче йĕрке тăвасси те, ял урамĕнче санитари нормисене çирĕп тытса пырасси те вĕсен полномочийĕн шутнех кĕрет. Хальхи вăхăтра урамра вутă-шанкă таврашне, строительство материалĕсене вырнаçтарса тултарни те санитари тата пушар хăрушсăрлăх нормисене пăсни пулса тăрать. Кун пек хăтланакансене явап тыттармалли мерăсене пăхса хунă. Канализаци çăлĕсене урам хушшине вара пачах та чавма ирĕк çук.

Таса мар шыв юхса тулмалли çăла харпăр хăй мĕнле майпа чавса вырнаçтармалли пирки СНИП тата СанПиН нормисене çирĕплетнĕ. Асăннă нормăсемпе килĕшӳллĕн кун пек канализаци çăлĕ çуртпа юнашарти территорире вырнаçмалла. Водопровод системинчен 10 метртан, ĕçмелли шыв илмелли çăлтан 20 метртан кая мар инçĕшĕнче пулмалла. Кунпа пĕрлех канализаци çăлĕ кӳршĕ хуçалăхри çурт-йĕрпе хуралтăсенчен 10 – 12 метр инçĕшĕнче пулма тивĕç. Канализаци çăлне кӳршĕ çĕр участокĕн чиккинчи хӳмерен 1 метртан кая мар инçĕшĕнче вырнаçтармалла.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Пирĕн календарь

# Турккăсен эскадрине аркатнă

**Сентябрĕн 11-мĕшĕ – Раççей çар мухтавĕн кунĕ.**

Çак кун 1790 çулта вырăссен Федор Ушаков ертсе пыракан эскадри Тендра сăмсахĕ патĕнче турккăсен эскадрине аркатнă. Турккăсем 2000 çынна çухатнă. Тăшманăн сыхланса юлнă карапĕсем Хура тинĕсĕн çурçĕр пайĕнчен тухса кайнă. Пирĕннисен çапăçура 21 çын вилнĕ.

Пирĕн ентешсем

# Даниил Храмов экипажĕ – çĕнтерӳçĕ



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Даниилпа унăн çарти пĕрремĕш çĕнтерĕвĕ хыççăн, кăшт каярах, тĕл пулса калаçма тӳр килнĕччĕ. Шăпах çав вăйăсем хыççăнах контракт çырнине, ашшĕпе амăшĕ – Владислав Владимировичпа Аэлита Юрьевна хирĕçлеменнине пĕлтернĕччĕ вăл. Кăçалхи çитĕнĕвне курса тăнă май, Даниил çавăн чухне чăнах та тĕрĕс йышăну тунă тесе çирĕплетсе калама пулать.

Даниил Храмов 2014 çулта Раççей çарне призывпа кайнă, мотострелоксен çар чаçне лекнĕ, службăра Кăнтăр Осетире Раççей çар базинче тăнă. Унăн вырăнĕ шăпах çарта пулнине çав пĕр çулталаск ăнланса илме пулăшнă.

Малтан Апчарта, хыççăн Мăн Сĕнтĕрти шкулта вĕреннĕ чухнех вăл физкультура урокĕсене кăмăллланă, алă вăйĕпе кĕрешессин, панкратион, ушу-сандай, волейбол секцийĕсене çӳренĕ. Спортпа туслăскер, вырăс чĕлхипе математика, обществознани предмечĕсене те килĕштерсе вĕреннĕ. «Атте çумĕнче пĕчĕкренех техника çумне «çыпăçса пынă», çара кайсан вара техникăна туллин туйса илтĕм», – тенĕччĕ тăватă çул каяллах Даниил. «Танк биатлонĕнчи» çĕнтерӳ вара вăл халĕ питĕ ăста танкист пулнине çирĕплетет.

2018 çулта та Даниилăн «Танк биатлонне» хутшăнма май пулнă. Тĕнче шайĕнчи вăйăсен пур тапхăрне те тивĕçлипе тухать вăл, çапах та – Раççей командин запас экипажĕн йышĕнче. Паллах, çакăнпа кăна çырлахмасть тĕллевсене пурнăçлама хăнăхнăскер, тата та ытларах хавхаланса ăсталăхне ӳстерме тытăнать.

2021 çул ăна çĕнтерӳ парнелет: пĕтĕм тĕнче Даниил Храмов танкист-чемпион пулнине пĕлет халĕ. Танкист кунĕ умĕн – питĕ тивĕçлĕ парне, «Патриот» УАЗ машинăпа **(2-мĕш сăн ӳкерчĕкре)** пĕрле, паллах.

Çĕнтерӳ хыççăн: «Ăнăçу вăрттăнлăхĕ – тренерпа пĕрле тăтăшах тренировкăсене хутшăнса хатĕрленӳ шайне ӳстерсе пынинче», – тенĕччĕ Даниил Храмов «Красная Звезда» хаçат журналисчĕн ыйтăвне хуравланă май.

Алабинори ăмăртура Даниилăн ăсталăхне курма ашшĕ, кукашшĕ тата йăмăкĕ те кайнă **(1-мĕш сăн ӳкерчĕкре)**. Даниилăн экипажĕ çисĕм пек хăвăрт, çав вăхăтрах пĕр йăнăшсăр финиша çитсен мĕнлерех савăннă пулĕ вĕсем. Савăнмасăр...

Сăмах май, Даниилăн пиччĕшĕ те – çар çынни. Апла икĕ йăмăкĕн те, ывăлĕсене тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернĕ ашшĕ-амăшĕн те мăнаçланмалăх пур.

Саламлатпăр Храмовсен çемйине.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



Сывлăх

# «Ним хăрамалли те çук, прививка туни – хамăршăн»

Эпĕ Пăсăрман ялĕнче пурăнакан Игорь Крысин патне çитсе килтĕм, вăл – хамăр тăрăхри сумлă çынсенчен пĕри. 91 çултине пăхмасăр – унăн сасси унчченхи пекех таса та уçă. Сентябрь уйăхĕнче вара хисеплĕ ветеран пурнăç сукмакĕпе тепĕр çул сулмаклăн илсе пусать. Апла пулин те вăл хăйне çирĕп тытма тăрăшать, унченхи йăлана, сывă пурнăç йĕркине пăхăнать, спорт хусканăвĕсем тăвассине, утассине ветеран пăрахăçа кăларман. Унăн сывлăхĕпе кăсăкланса вăл мана сĕнӳ пачĕ.



– Сĕтел çинче сывлăхшăн усăллă çимĕçсем – хамăр лартса ӳстернисем – хĕлĕн-çăвĕн пулмалла. Хăярпа помидортан тунă салата питĕ юрататăп, вăл кашни кун ман сĕтел çинче, ытти пахча çимĕçсĕр те пурăнмастăп. Хĕл кунĕнче сĕтел çинче йӳçĕтнĕ купăста, хĕрлĕ кăшман, кишĕр, ыхрапа сухан яланах пулмалла. Вĕсем пирĕн организма питĕ кирлĕ. Кăçал çак вăхăт тĕлне 70 яхăн витре помидор татса пуçтартăмăр. Унран тунă сĕткене питĕ юрататăп, ăна ĕçме çителĕклĕ хатĕрлетпĕр. Эрех-сăра таврашне пачах та ĕçместĕп, туртмастăп, эрех таврашĕ тытманни хĕрĕх çул та иртрĕ. Кашни ире гимнастикăран пуçлатăп, пахчана тухса тĕрлĕ хускану туса утатăп, хĕлле йĕлтĕрпе çӳреме кăмăллатăп, витрене шыв тултарнă вăхăтра та ал-урана хускататăп. Ĕçлес, пурăнас кăмăл чакман-ха, – терĕ вăл кăмăллăн.

Çавăн пекех Игорь Гаврилович сывлăха мала хунине коронавирусран прививка туни те çирĕплетет.

– Шухăшларăм та коронавирусран эпĕ те прививка тутарас терĕм. Район хаçачĕн кашни номерне тĕплĕн вуласа пыратăп та вырăнтах прививка тума май пуррине пĕлтĕм. Çынсем хушшинче прививка пирки тĕрлĕрен сăмах çӳренине пăхмасăр, пуçтарăнтăм та Пăсăрманти фельдшерпа акушер пунктне тухса утрăм. Ман пек çынсем патне тухтăрсем киле тухса çӳренине пĕлетĕп-ха, çапах та ура утнă чухне хамах çитсе килес терĕм. Тухтăрсем манăн сывлăха тĕрĕслерĕç, анализсем лайăххине пĕлтерчĕç, прививка тума нимĕнле чару çуккине каларĕç, ку, паллах, мана хавхалантарчĕ, – калаçăва малалла тăсрĕ вăл.

Игорь Гаврилович каланă тăрăх, пĕрремĕш тата иккĕмĕш прививкăсене тунă хыççăн хăйне йĕркеллех туйнă, температура хăпарман, юн пусăмĕ те унченхи виçепех пулнă. Июнь тата июль уйăхĕсенче тунă прививкăсене вăл лайăх чăтса иртернĕ.

– Ку прививкăран ним хăрамалли те çук, çынсене хăйсен тата ыттисен сывлăхне упраса хăварас тесе прививка тума сĕнетĕп, кĕрхи йĕпе-сапа пуçланиччен тусан лайăхрах та пулĕ, – тет вăл.

Хăйне япăх мар туйнăран пысăк опытлă пахчаçăпа картишне тухса куртăм. Унта эпĕ маларах та пулса курнăччĕ. Ветеран пахчара тăрăшмасăр чăтаймасть, тĕрлĕ çимĕç лартса ӳстерет, паллах, ку ĕçре ăна ачисемпе мăнукĕсем пулăшаççĕ. Çавăн пекех вăл пĕр хăнăхнă хурт-хăмăрсăр та пурăнаймасть, вĕсем çине пăхса киленет, пĕр шикленмесĕрех вĕллесем хушшипе утса иртет. Хушма хуçалăха хăйне майлă производство тесен те юрать. Çулсеренех пахча çимĕç хăйсем валли кăна мар, сутлăх та туса илеççĕ. Ку ĕçпе вĕсем чылай çул ĕçлеççĕ.

Игорь Гаврилович ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне вĕренӳ сферине халалланă, педагогикăри стажа 26 çула çитернĕ. Ачасене вăл биологи предметне вĕрентнĕрен хушма хуçалăхра ĕçлесси ăна уйрăмах сывăх. Çавăн пекех ветеран хăй вăхăтĕнче районти ответлă должноçсенче чылай тăрăшнă. Ĕç çулĕсенчи Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсене уйрăм кĕнекере тирпейлĕн упрать, йышлă вĕсем. Питĕ шел, халĕ ун çумĕнче мăшăрĕ текех çук, ку Игорь Гавриловичшăн пысăк çухату пулчĕ. Апла пулин те вăл хăйне алăра тытма тăрăшать, пурнăç малалла пынине ăнланать.

Ветеран хăйĕн ачалăхне аса илмесĕр чăтаймарĕ. Ыттисен пекех вăл питĕ нушаллăн иртнĕ, ачаллах ашшĕнчен юлсан татах та йывăр килнĕ. Çемьере виçĕ ача пулнă. Игорь Гаврилович Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан амăшĕ Сăр хĕрне окоп чавма кайнине астăвать. Çавăн чухне вăл кукамăшĕ патĕнче пурăннă, унпа пĕрле уйран улăм пуçтарса килсе кăмака хутнă, çавăн ăшшипех яшка пĕçернĕ, шыв вĕретнĕ. Пурнăç йывăр пулсан та каярах ачасене амăшĕ пурне те аслă пĕлӳ панă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА. Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**